# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

**Муркаш район хаҫачӗ** **1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать**

*35 (8602) №* * *Юнкун, ҫу (май) уйӑхӗн 16-мӗшӗ* * *Хакӗ ирӗклӗ*

**Ҫемье кунӗнчен**

## Килӗшӳллӗ пурӑнни ӑнӑҫу ҫуратать



**Ӗнер Пӗтӗм тӗнчери ҫемье кунне паллӑ турӑмӑр. Ҫавна май район администрацийӗн ЗАГС пайӗн чаплӑ лару-тӑру залне ыттисемшӗн ырӑ тӗслӗх пулса тӑракан ҫемьесем пухӑнчӗҫ. Кашни ял тӑрӑхӗнченех пулчӗҫ вӗсем. Пухӑннисене район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ростислав Тимофеев саламларӗ. Тӗл пулӑва ЗАГС пайӗн пуҫлӑхӗпе Е. Ивановӑпа ертсе пыракан эксперт специалисчӗ Н. Корнеева кӑмӑллӑ йӗркелесе пычӗҫ. Район пурнӑҫӗнче палӑракан ҫемьесене саламласан уяв йӗркелӳҫисем кӑҫал ылтӑн туй ирттернисене чысларӗҫ. Ку йышра Катькас ял тӑрӑхӗнчи Вера Петровнӑпа Семен Васильевич Ильмендеровсем тата Оринин ял тӑрӑхӗнчи Вера Афанасьевнӑпа Николай Иванович Музыковсем пулчӗҫ. Килӗшӳллӗ пурнӑҫпа ытларах пурӑнакансем те пур пирӗн хушӑра. Тӗслӗхрен, Ярапайкасси ял тӑрӑхӗнчи Вера Ивановнӑпа Никит Михайлович Даниловсем. Сӑн ӳкерчӗкре 60 ҫул пӗрле пурӑнакансене бриллиант туйпа ЗАГС пайӗн ертӳҫи Елена Иванова, район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ростислав Тимофеев саламланине куратӑр. Елачара пурнӑҫ йӑви ҫавӑрнӑ мӑшӑр ӗҫрен пӑрӑнмасӑр 5 ача ҫуратса ӳстернӗ. 10 мӑнукӗпе 5 кӗҫӗн мӑнукӗ – 40 ҫул тракторпа ӗҫленӗ аслӑ асаттепе уй-хир бригадин ӗҫӗнчен пӑрӑнман аслӑ асаннен паянхи савӑнӑҫӗ.**

**Тӗл пулура РФ Пенси фончӗн управленийӗн районти пайӗн ертӳҫи Ирина Гришина ҫамрӑк ҫемьесене амӑш капиталӗн сертификатне пачӗ. Ҫавна май вӑл вӗсене ӗҫре пиҫӗхнӗ ҫемьесене пурнӑҫ тӗслӗхне лартма сӗннипе пурте килӗшрӗҫ тесе шутлатӑп.**

**А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**

**Республикӑра**

## Чӑваш Ен тӗп уява хатӗрленет

Ҫу уйӑхӗн 11-мӗшӗнче Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн Председателӗ Иван Моторин 2018 ҫулта Республика кунне хатӗрленессипе йӗркеленӗ комитетӑн ларӑвне ирттернӗ.

Палӑртмалла, кӑҫал Чӑваш Енре сахал мар мероприяти плана кӗртсе хӑварнӑ, вӗсенчен нумайӑшӗ ҫӗнӗ форматпа пуласси те паллӑ.

Уяв шайӗнчи экономика мероприятийӗсем пирки экономика министрӗ Владимир Аврелькин каласа панӑ. Вӑл Республика кунне халалласа сахал мар ҫӗнӗ объект уҫӑлассине хыпарланӑ, регион кӑҫал ҫӗнӗ ӳсӗмсемпе палӑрассине пӗлтернӗ. Республика кунӗ тӗлне В.И. Чапаев ячӗллӗ заводра, Муркаш районӗнчи «Сеспель» пӗрлешӳре, Шупашкарти «Чувашторгтехника» пӗрлешӳре ҫӗнӗ производствӑсем уҫма палӑртнӑ.

Ҫавӑн пекех вице-премьер «Регионсем – чикӗсӗр ӗҫтешлӗх» курав, фейерверксен фестивалӗ ҫав кунсенчи тӗп пулӑмсен шутӗнче пулассине каланӑ.

Патшалӑхӑн тӗп уявӗнче кӑҫал «Волга – Янцзы» регионсен хушшинчи канашӗн виҫҫӗмӗш ларӑвӗ пулассине те палӑртнӑ. Ҫакӑ Шупашкарта пулакан экономика форумӗпе тӳр килӗ. Палӑртса хунӑ тӑрӑх, ӗҫе кӑҫал ҫурла уйӑхӗнче йӗркелесе ирттерме плана кӗртнӗ.

«Регионсем — чикӗсӗр ӗҫтешлӗх» регионсен хушшинчи курав формачӗ улшӑнасси паллӑ. XXV-мӗш курав Шупашкарта Хӗрлӗ тӳремре иртет. Халӑх валли ятарлӑ уйрӑмсем пулӗҫ. Вӗсем, «Промышленноҫ», «Сывлӑх сыхлавӗ», «Строительство» тата «Наука» ятлӑ куравсем.

Ҫӗртме уйӑхӗн 15-мӗшӗнче Раҫҫейри предпринимательсен кунне халалласа торжествӑлла пулӑм иртӗ.

Ҫӗртме уйӑхӗн 14−15-мӗшӗсенче «Росатом» Патшалӑх корпорацийӗ Шупашкарта конференцисем ирттерме палӑртнӑ. Вӗсен тӗп тӗллевӗ − пӗр-пӗринпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлесси, таварсен калӑпӑшне тата пахалӑхне ӳстересси.

Чӑваш Республикинче алюмини таврашне тирпейлесе кӑларассипе ҫыхӑннӑ ыйтусемпе конференцие ҫӗртме уйӑхӗн 24-мӗшӗнче ирттересси те паллӑ.

Ҫӗртме уйӑхӗн 23−24-мӗшӗсенче фейерверксен фестивалӗ пулӗ, унта малтанласа палӑртса хунӑ тӑрӑх 5 ушкӑн пулассите паллӑ.

Чӑваш Республикин культура министрӗ Константин Яковлев Республика кунӗ ячӗпе палӑртнӑ мероприятисем ҫинче чарӑнса тӑнӑ. Министр пӗлтернӗ тӑрӑх — ҫулсерен иртекен «Раҫҫей ҫӑлкуҫӗсем» фестивале кӑҫал Сӗнтӗрвӑрри районӗнче уҫма палӑртнӑ. Пӗтӗмлетӳллӗ мероприяти тӗп хулара заливра иртӗ.«Руҫ ӑстисем» конкурса хутшӑнакансем те малтан хӑйсен пултарулӑхӗпе республика районӗсенче пурӑнакансене паллаштарӗҫ. Ҫирӗпленнӗ йӑлапа ҫӗртме уйӑхӗн 23-мӗшӗнче Пӗтӗм чӑвашсен Акатуйӗ пулӗ, тепӗр кунне Хӗрлӗ тӳремре Чӑваш Енри Ачасен пӗрлештернӗ хорӗ юрлӗ, унта 1000 ача хӑйсен пултарулӑхне кӑтартса парасси те паллӑ.

Шупашкар хула администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ Владимир Филиппов хӑйӗн докладӗнче кӑҫал уява Ырӑ ӗҫ тӑвакансен ҫулталӑкне халалласа йӗркеленине асӑннӑ. Сӑмах май, Чӑваш Республикинче Иван Яковлев ҫуралнӑранпа 170 ҫул ҫитнине тепӗр хут каланӑ.

Республика кунӗ тӗлне хулари Мускав ҫыран хӗррине тирпейлессипе 2−3-мӗш тапхӑрӗпе пулса пыракан ӗҫсене вӗҫлеме тӗллев лартнине хыпарланӑ вӑл сӑмаха малалла тӑснӑ май, Хӗрлӗ площадьре футбол Чемпионатне курма ятарлӑ тӗп вырӑн пуласса пӗлтернӗ. «Хӑрушлӑхсӑр паха ҫулсем» программӑпа килӗшӳллӗн, хулари тӗп урамсене юсама пӑхса хӑварнине те каланӑ вӑл.

Сӑмах май, Республика кунӗн тӗп мероприятийӗсем кӑҫал ҫӗртме уйӑхӗн 24-мӗшӗнче Шупашкарта тата Красноармейски районӗнче иртӗҫ. Кун пирки Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев Указа та алӑ пусса ҫирӗплетнӗ. Палӑртма кӑмӑллӑ, муниципалитет территорисене тирпей-илем кӗртме тата мероприятисем ирттерме 10 миллион тенке яхӑн илӗ. Красноармейски районӗн администрацийӗн пуҫлӑхӗ Александр Кузнецов мероприятисем пирки тарӑнрах каласа кӑтартнӑ, сахал мар ҫӗнӗ объект хута каяссине хыпарланӑ.

**Салам**

**МУРКАШ РАЙОНӖН**
**ХИСЕПЛӖ ҪЫННИСЕМ!**

Сире пурне те Пӗтӗм тӗнчери ҫемье кунӗ ячӗпе чун-чӗререн саламлатпӑр.

Ҫемье кашни ҫыншӑн пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Кунта ача ырӑпа усала уйӑрма, аслисене, пӗр-пӗрне хисеплеме вӗренет, ӗҫе хӑнӑхса ҫитӗнет. Ҫавӑнпа та пирӗн хамӑр ачасемшӗн яланах ырӑ тӗслӗх пулмалла.

Чуна йывӑр чухне те килте пире ҫывӑх ҫынсем яланах ӑнланаҫҫӗ, пулӑшаҫҫӗ. Малашне те тӑван кил кашни ҫыншӑн чун туртнӑ вырӑн пултӑр.

Уйрӑм тав сӑмахне нумай ачаллӑ ҫемьесемпе урӑх ҫемьери ачасене хӑйсен хӳттине илнӗ ашшӗ-амӑшӗсен ячӗпе калас килет.

Паян пирӗн ҫӗршывра ачаллӑ ҫемьесене пысӑк тимлӗх уйӑраҫҫӗ. Ҫакна юлашки вӑхӑтра пулса иртнӗ ырӑ улшӑнусем те ҫирӗплетеҫҫӗ.

Хаклӑ ҫыннӑмӑрсем! Пурне те уяв ячӗпе саламлатпӑр. Ҫирӗп сывлӑх, телейлӗ вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр.

**Район пуҫлӑхӗ – депутатсен район**
**Пухӑвӗн председателӗ**
**И. НИКОЛАЕВ.**
**Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

**Информаци кунӗ**

## Кашни ял тӑрӑхӗнчех

Паян республикипех Пӗрлехи информаци кунӗ иртет. Ҫавна май пирӗн районти информаци ушкӑнӗсем кашни ял тӑрӑхне ҫитсе унти ӗҫ коллективӗсемпе тӗл пулаҫҫӗ.

Ку хутӗнче РФ Президенчӗн 2018 ҫулхи майӑн 7-мӗшӗнче «О национальных целях и стратегических задачах развития Российской Федерации на период до 2024 года» указӗ пирки, ҫуллахи каникул вӑхӑтӗнче ачасемпе ҫамрӑксен канӑвне йӗркелесси, вӗсене ӗҫе явӑҫтарасси тата вӗсен сывлӑхне ҫирӗплетмелли ӗҫе пурнӑҫласси пирки калаҫӗҫ, республикӑра тата районта ҫур аки мӗнле пынипе паллаштарӗҫ.

**Ҫур аки – 2018**

## Ака сарӑлать

Иртнӗ ытларикун тӗлне районти ял хуҫалӑх предприятийӗсем ҫуртри акма пӗтӗмпе 7 пин гектара яхӑн ҫӗр хатӗрленӗ. Ку ӗҫсем малалла пыраҫҫӗ. Чылай ҫӗрте ҫӗр хатӗрлессине икӗ сменӑпа йӗркеленӗ. Иртнӗ кунсенче вара хатӗр ҫӗрсене малтанхи ака агрегачӗсем тухрӗҫ. Ҫуртрисене кӗске вӑхӑтра районӗпе 3356 гектара яхӑн (28 процент) акма та ӗлкӗрчӗҫ.

А. Толстовӑн хресчен (фермер) хуҫалӑхӗ ҫӗр улми лартма тухнӑ.

«Герой» хуҫалӑх 14 гектар пахча ҫимӗҫ акнӑ.

**Ҫырӑнтару – 2018**

## Майӑн 10 – 20-мӗшӗсенче – йӳнетнӗ хакпа

**Вулакансем кӗтнӗ декада ҫитрӗ. Ҫак тапхӑрта районти «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата йӳнетнӗ хакпа ҫырӑнтараҫҫӗ.**

**Хаҫата ултӑ уйӑха ҫырӑнмалли хак – 397 тенкӗ те 44 пус. Кайран 434 тенкӗ те 22 пуспа ҫырӑнмалла пулать.**

**Ҫӑмӑллӑхпа усӑ курма васкӑр!**

Саламлатпăр

Пирĕн хаклăран та хаклă, юратнă çыннăмăра – Москакасси ялĕнче пурăнакан **Алексей Анатольевич ОДИНЦОВА**



юбилей ячĕпе чĕререн саламлатпăр. Çемьере яланах килĕшӳ, юрату, ăнланулăх хуçаланччăр. Халăх хушшинчи пысăк хисеп, ырă яту нихçан та ан иксĕлччĕр, сывăх çыннусен тимлĕхĕ ялан телей те савăнăç кӳччĕр сана, мĕн шутлани пурнăçланса пытăр.

**Саламлаканĕсем: Архиповсен, Беловсен, Шашковсен çемйисем.**

Пирĕн юратнă, хаклă мăшăра, аттене, маçака, кукаçа, Çурлатри ялĕнче пурăнакан **Василий Кузьмич КРЮЧКОВА**



сумлă юбилейпа – 85 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Парка тымарлă кун-çул, чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх сунатпăр. Эс пурришĕн эпир савăнатпăр, аннепе иксĕре телей сунатпăр. Ан чирле эсĕ, ан ватăл. Телей çут çăлтăрĕ сирĕн çемьене асамлă шевлине сапаласа хĕпĕртеттертĕр.

**Салампа: мăшăрĕ, 2 ывăлĕ, кинĕсем, 2 хĕрĕ, кĕрӳшĕсем, Даниловсен, Кирпичниковсен çемйисем, 6 мăнукĕ, 3 кĕçĕн мăнукĕ.**

Хисеплĕ те хаклă çыннăмăра, аннене, кукамая – Очăкасси ялĕнче пурăнакан **Галина Изосимовна МИХАЙЛОВĂНА** çу уйăхĕн 20-мĕшĕнче 60 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Пурнăç çулĕ такăр та вăрăм пултăр. Пире ăшă кăмăлупа нумай çул савăнтарса пурăн. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр, пирĕнпе юнашар пулнишĕн савăнатпăр, тав сăмахĕ калатпăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕпе ывăлĕ, кĕрӳшĕ, хăти-тăхлачи, мăнукĕсем, йăмăкĕсем, сывăх тăванĕсем.**

Пирĕн хисеплĕ çыннăмăра, хаклă мăшăра, ăшă кăмăллă аттене, юратнă кукаçа, шанчăклă тăвана – Муркаш ялĕнче пурăнакан **Петр Ананьевич РОМАНОВА**



70 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çак ятпа мĕнпур ыррине кăна сунатпăр. Мĕн шутланисем пурнăçланса пычăр, чир-чĕр санран аяккалла пăрăнтăр. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн Турра тав тăватпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 2 хĕрĕ, 5 мăнукĕ тата шăллĕсем çемйисемпе, тăванĕсем.**

Эпир хамăрăн чи юратнă çыннăмăра – Оринин ялĕнче пурăнакан **Валентина Ивановна АЛЕКСЕЕВĂНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр.



Юратнă мăшăрăм, аннеçĕм, йăмăкăм, тăванăм, эпир санпа мухтанатпăр, сана юрататпăр, хисеплетпĕр. Телейпе ăнăçу яланах санпа пĕрле пулччăр, ĕмĕтӳсем çитсе пычăр, пурăнас кун-çулу такăр та вăрăм пултăр, хăвăн ăшă кăмăлупа нумай çул пире савăнтарса пурăн. Чир-чĕр санран пăрăнса ирттĕр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, амăшĕ, икĕ хĕрĕ, пиччĕшĕ, тăванĕсем.**

Çамрăксене пĕлме

# Ятарлă стипенди

Муркаш район администрацийĕн 2016 çулхи апрелĕн 15-мĕшĕнчи 190 номерлĕ йышăнăвĕпе районти ĕçлекен çамрăк специалистсене ятарлă стипенди парса хавхалантарма положени çирĕплетнĕ.

Муркаш районĕнче пурăнакан, производствăра, спортра, пултарулăхра тата общеçтвăлла ĕçре çитĕнӳсем тунă ĕçлекен çамрăксене хавхалантарас тĕллевпе ятарлă стипенди çирĕплетнĕ. Ăна 21–30 çулти ĕçлекен çамрăксем тивĕçме пултараççĕ. Çакна валли организацисен стипенди илме тăратнă кандидатсен документсене майăн 21-мĕшĕччен конкурс комиссине çитермелле (Муркаш, Мир урамĕ, 6-мĕш çурт, 226 пӳлĕм. Тел.: 62-0-92).

Профилактика кунĕ

# Çатракассисен малалла та пĕрлех тимлемелле

Иртнĕ кĕçнерникун Çатракасси ял тăрăхĕнче профилактика кунĕ пулчĕ. Профилактика субъекчĕсен представителĕсем икĕ ушкăна пайланса ял тăрăхĕнчи пур ялта та пулчĕç. Учетра тăракан уйрăм çынсем патне те, çемьесене те çитсе унти лару-тăрупа паллашрĕç. Хыççăн вара пĕтĕмлетӳ тума ял тăрăхĕнчи активпа пĕрле ял тăрăхĕн администрацине пухăнчĕç.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Лилия Тарасова сăмах илсе пурне те уçă та конкретлă калаçăва хутшăнма чĕнсе каларĕ.

Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Надежда Иванова вырăнти профилактика канашĕн ĕçĕ çинче чарăнса тăнă май, кăçал кăна хăш-пĕр çемьесене икĕ-виçĕ хутчен çитнине палăртрĕ. Вăл хăй те май килнипе учетра тăракан çемьесенче тăтăшах пулать-мĕн.

«Нумайăшне кил-çурт тавраш ĕнче, пӳртре тирпейлемелли пирки калама тивет. Çавăнпа та хăшĕсем патне ирпе те, каçпа та кайса тăнă. Усси çавах кăшт палăрать. Икĕ çемьере лайăх улшăну пурри сисĕнет. Пурте лайăх енне улшăнас пулсан, питĕ аван пулмалла та», – терĕ Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Надежда Иванова вырăнти йывăр-лару тăрулла çемьесемпе епле ĕçлени пирки калана май.

Ку тăрăхра учетра 8 çемье тăрать. Кăçал тепĕр çемье куçса килнĕ. Унта çул çитмен ача пур пирки çемьене асăрхаса тăма йышăннă. Çемьесенчи улшăнусем йĕркесĕррипе çыхăннă ыйтупа пыракансене ял тăрăхĕн администрацийĕнче уйрăмах пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Çийĕнчех профилактика канашĕн членĕсем е хăйсем тĕллĕн, е участковăйпа пĕрле çемьесене çитсе килеççĕ. Çапла пулма пултаракан йĕркесĕрлĕхе, преступление асăрхаттарма май пуррине палăртаççĕ вĕсем. Надежда Иванова ял тăрăхĕнче çуллахи вăхăтра «çĕрлехи хурал» йĕркеленине те пĕлтерчĕ.

Алексей Оньков участковăй çулталăк пуçланнăранпа территорире виçĕ преступлени пулнине, ялсенче эрех ĕçекенсем сахал маррине палăртрĕ. Çемьесенче те çавна пула харкашусем час-часах тухнине каларĕ. Районти шалти ĕçсен пайне талăкра вăтамран килекен 15 хыпартан 4–7 хыпарĕ те шăпах ĕçсĕрле харкашни е хĕненипе çыхăннă. «Çак пулăма кашни ял тăрăхĕ çинех проекцилеме пулать», – терĕ вăл. Тепĕр саманта та палăртса хăварчĕ: Çатракасси ял тăрăхĕнче хĕç-пăшалпа усă куракан çынсем сахал мар. Вĕсене полицейскисем саккунпа килĕшӳллĕн тĕрĕслесе тăраççĕ.

Шкулти, ача садĕнчи лару-тăрупа паллашнă хыççăн ял тăрăхĕнче, пĕтĕмĕшле илес пулсан, пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлессине япăх мар йĕркеленĕ теме пулать. Мĕншĕн тесен шкулта учетра тăракан ачасем пирки те, ача садне çӳрекенсен çемйисем пирки те пурте пĕлсе тăраççĕ. Çакна пĕтĕмлетĕве хутшăннă медицина ĕçченĕсемпе культура ĕçченĕсем калаçура конкретлă хушаматсем, конкретлă тĕслĕхсем илсе кăтартни те çирĕплетсе пачĕ. Профилактика субъекчĕсем пĕр-пĕрне информаци пĕлтерсе тăни курăнчĕ.

Хăш-пĕр çемьесене вара çул çитменнисемпе ĕçлекен тата вĕсен прависене хӳтĕлекен районти комиссин учетĕнчен ачисем 18 çула çитнĕрен кăна кăларма май пур. Лайăх енне улшăнман çемьесен районта сахал маррине палăртса, Лилия Тарасова малашне те ял тăрăхĕсенчи çемьесенче тăтăш пулса унти лару-тăрăва куçран вĕçертмелле маррине асăрхаттарчĕ.

Ашшĕ-амăшĕ ырă енне улшăнма васкаманран ачисем йывăрлăх тӳсеççĕ, çавăнпа та Çатракасси шкул директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ Л. Никитина хăш-пĕр ача валли апатланăва çăмăллăх майĕпе йĕркелеме май çук-ши тесе пăшăрханса каларĕ. Çавăн пекех çуллахи вăхăтра ачасене шкул çумĕнчи лагере çӳреме пăтăрмахлă пулнине те палăртрĕ, мĕншĕн тесен вĕренӳ уйăхĕсем вĕçленсен ачасене шкула автобуспа илсе çӳремеççĕ.

Лилия Тарасова ыйтусене контроле илсе çитес вăхăтра ятарлă канашлура сӳтсе явма шантарчĕ.

Комисси ĕçне йĕркелесе пыракан секторăн ертӳçи Александр Данилов тепĕр самант çине тимлĕх уйăрма сĕнчĕ. Вĕсем тĕрĕслевпе пулнă çемьесенче нумайăшĕ чирлет-мĕн. «Ӳсĕррисем çукчĕ. Хăшĕсем çав-çавах тирпейленеймеççĕ-ха. Миçе килте пултăмăр – чылайăшĕ чирлет», – пĕлтерчĕ вăл.

Кун пирки вырăнти медицина ĕçченĕсем пĕлеççĕ. Хăшĕсене вĕсем Муркаша педиатр патне янă, теприсем сипленеççĕ. Ачасене контрольлесе тăраççĕ, вăл шутра 1 çул тултарман 11 ачана та.

Ял тăрăхĕнчи профилактика канашĕнчи учет спискĕ пĕлтĕрхи пекех юлни, унта çĕнĕ хушаматсем çырăнманни лайăх паллах. Çапах та учетран çирĕплĕнех кăларма май пур çемьесем те хальлĕхе çуккине палăртрĕç. Апла çатракассисен малалла та пĕрле тимлемелле.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Асăрхаттару

# Серепене ан лекĕр

Çынсен банк карттисем çинчен укçатенкĕ вăрлакансем ытларах чухне граждансен тимсĕрлĕхĕпе тата шанăçĕпе усă кураççĕ. Уйрăмах вĕсене тӳлевсĕр пĕлтерӳсен сайчĕсем тата социаллă сеть илĕртет. Кун пеккисем хăйсене тавар туянас кăмăллă çын тесе кăтартма пултараççĕ. Тавара урăххи ан туянтăр тесе банк картти çине аванс шучĕпе укçа хурса пама килĕшеççĕ. Çавна май телефонпа шăнкăравланă чухне сутуçăн карттин даннăйĕсене пĕлтерме ыйтаççĕ: номерне, CVC2/CVV2 кодне, картта хăçанччен вăйра пулнине, хушаматпа ята тата ашшĕ ятне. Хăш-пĕр чухне СМС-па пыракан кода та асăнма ыйтаççĕ. Çапла майпа банк картти пирки кирлĕ информацие илнĕ хыççăн укçа-тенкĕне çăмăллăнах вăрлаççĕ.

Енчен те ултавçăсем хăйсене сутуçă пек кăтартаççĕ пулсан, банк картти çинчен маларах укçа куçарма ыйтаççĕ, унăн даннăйĕсене ыйтса пĕлеççĕ. Акă çапла майпа ултавçăсен серепине çакланнă пĕр çын ача кравачĕне туянас тенĕ, социаллă сетьре пĕлтерӳ тупнă. Сутуçă ăна таваршăн укçан пĕр пайне маларах тӳлеме ыйтнă, унăн банк карттин ПИН-кодне ыйтса пĕлнĕ. Кравать туянакан çапла тунă та. Анчах та унăн картти çинчен аванссăр пуçне татах 17 пин тенкĕ çухалнă.

Кун пек лару-тăрăва лекес мар тетĕр пулсан, çакна ан манăр:

– картта çинчен счетсем хушшинче укçа куçарма картта номерне пĕлни çителĕклĕ. Укçа куçарма сирĕнтен пароль, ПИН-код, код сăмахне, СМС-па пыракан кода ыйтакана нихçан та ан ĕненĕр. Кун пек информацие банк сотрудникĕсене те пама юрамасть;

– интернетра тавар туянма е услугăсемшĕн тӳлеме хăйне уйрăм банк картти пулсан лайăхрах.

Енчен те сирĕн банк картти çинчен хăвăрсăрах укçа илнине пĕлтĕр пулсан:

1. Çийĕнчех банка шăнкăравлăр, карттăна блокировать тума ыйтăр. Банк картти хысĕнче кăтартнă номерпе шăнкăравлас пулать. Телефон номерне банкăн официаллă сайтĕнче те шыраса тупма пулать.

2. Банк уйрăмне каймалла. Счетăн выпискине илмелле те операцисемпе килĕшменни пирки заявлени çырмалла. Банк сотрудникне заявление йышăнни пирки паллă тума ыйтăр, датине кăтартăр.

3. Право сыхлав органне кайса укçатенкĕне вăрлани пирки заявлени çырăр.

**Раççей банкĕн Атăлпа Вятка патшалăх учрежденийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ.**

Ыйту – хурав

# Лавкка та, аптека та пулать



*«Муркашра «Центральный» магазина пăснă. Йĕрĕ те юлман. Кунта пысăк лавкка пулать теççĕ. Ăна хăçан туса хута яма палăртнă?»*

*Редакцие шăнкăравланинчен.*

**Çак ыйтăва хуравлама, паллах, Муркаш райпо канашĕн председательне Борис Андреева ыйтрăм. Вăл çакна палăртрĕ:**

– Тĕрĕсех, лавкка çуртне пăсрăмăр. Пăшăрханма кирлĕ мар – лавкка çак вырăнтах пулать. Кунта çĕнĕ çурт хăпартатпăр. Унта лавкка та пулĕ, аптека та пулмалла. Çавăн пекех эпир çуртра общеçтвăлла апатлану йĕркелемелли вырăн та пăхса хунă.

Çĕнĕ çурта тăвас ĕçсем ку эрнере пуçланчĕç. Вĕсене, вăраха тăсмасăр, виçĕ уйăхра туса иртерешĕн.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

ИНФОРМАЦИОННЫЙ БЮЛЛЕТЕНЬ № 1 от 16 мая 2018 года

Организатор аукциона – Управление экономики, развития АПК и муниципальной собственности администрации Моргаушского района Чувашской Республики (местонахождение: с.Моргауши, ул. Мира, д.6; почтовый адрес: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с.Моргауши, ул.Мира, д.6; адрес электронной почты: morgau_econom6@cap.ru; номера контактных телефонов: 8(83541)62435, 62339 18 июня 2018 года в 10.00 часов по адресу: с.Моргауши, ул. Мира, д.6 в каб. №311 на основании постановления администрации Моргаушского района Чувашской Республики от 14.05.2018 года № 482 проводит

## Аукцион
## на право размещения нестационарных торговых объектов (НТО) на территории Моргаушского района Чувашской Республики:

**Лот № 1 Право на размещение**

| № п/п | Информация об НТО | Параметры НТО |
|---|---|---|
| 1 | Номер по схеме | 1 |
| 2 | Месторасположение | д.Авданкасы, ул.Пионерская, д.15а |
| 3 | Размер площади места размещения НТО | 27 кв. м |
| 4 | Тип | Торговый павильон |
| 5 | Специализация | продовольственные и непродовольственные товары в ассортименте |
| 6 | Срок действия договора | 5 лет с момента подписания договора, период осуществления торговой деятельности: круглогодично |
| 7 | Схема расположения НТО на территории Моргаушского района Чувашской Республики | См. приложение № 1 к проекту договора по лоту №1 |
| 8 | Начальный размер ежегодной платы за право на размещение НТО за указанный период осуществления торговой деятельности, руб. | 38340,0 |
| 9 | Размер задатка, руб. | 7668,0 |
| 10 | Величина повышения начальной цены права на размещение («шаг аукциона»), руб. | 3834,0 |

**Лот № 2 Право на размещение**

| № п/п | Информация об НТО | Параметры НТО |
|---|---|---|
| 1 | Номер по схеме | 2 |
| 2 | Месторасположение | с.Б-Сундырь, ул.Советская, д.9 «г» |
| 3 | Размер площади места размещения НТО | 17,5 кв. м |
| 4 | Тип | Торговый павильон |
| 5 | Специализация | непродовольственные товары (живые цветы, горшечные цветы, семена, удобрения, горшки, сувениры) |
| 6 | Срок действия договора | 5 лет с момента подписания договора, период осуществления торговой деятельности: круглогодично |
| 7 | Схема расположения НТО на территории Моргаушского района Чувашской Республики | См. приложение № 2 к проекту договора по лоту №2 |
| 8 | Начальный размер ежегодной платы за право на размещение НТО за указанный период осуществления торговой деятельности, руб. | 29557,5 |
| 9 | Размер задатка, руб. | 5911,5 |
| 10 | Величина повышения начальной цены права на размещение («шаг аукциона»), руб. | 2955,7 |

**Лот № 3 Право на размещение**

| № п/п | Информация об НТО | Параметры НТО |
|---|---|---|
| 1 | Номер по схеме | 3 |
| 2 | Месторасположение | с.Б-Сундырь, ул.Ленина |
| 3 | Размер площади места размещения НТО | 6 кв. м |
| 4 | Тип | Торговый киоск |
| 5 | Специализация | непродовольственные товары (газетно – журнальная продукция) |
| 6 | Срок действия договора | 5 лет с момента подписания договора, период осуществления торговой деятельности: круглогодично |
| 7 | Схема расположения НТО на территории Моргаушского района Чувашской Республики | См. приложение № 3 к проекту договора по лоту №3 |
| 8 | Начальный размер ежегодной платы за право на размещение НТО за указанный период осуществления торговой деятельности, руб. | 10134,0 |
| 9 | Размер задатка, руб. | 2026,8 |
| 10 | Величина повышения начальной цены права на размещение («шаг аукциона»), руб. | 1013,4 |

**Лот № 4 Право на размещение**

| № п/п | Информация об НТО | Параметры НТО |
|---|---|---|
| 1 | Номер по схеме | 4 |
| 2 | Месторасположение | с.Б-Сундырь, ул.Ленина |
| 3 | Размер площади места размещения НТО | 61 кв. м |
| 4 | Тип | Торговый павильон |
| 5 | Специализация | непродовольственные товары (бытовая техника, хозтовары, сотовые телефоны) |
| 6 | Срок действия договора | 5 лет с момента подписания договора, период осуществления торговой деятельности: круглогодично |
| 7 | Схема расположения НТО на территории Моргаушского района Чувашской Республики | См. приложение № 4 к проекту договора по лоту №4 |
| 8 | Начальный размер ежегодной платы за право на размещение НТО за указанный период осуществления торговой деятельности, руб. | 103029,0 |
| 9 | Размер задатка, руб. | 20605,8 |
| 10 | Величина повышения начальной цены права на размещение | 10302,9 |

**Лот №5 Право на размещение**

| № п/п | Информация об НТО | Параметры НТО |
|---|---|---|
| 1 | Номер по схеме | 5 |
| 2 | Месторасположение | Выселок Канаш, ул.Канашская, д.28 |
| 3 | Размер площади места размещения НТО | 60 кв. м |
| 4 | Тип | Торговый павильон |
| 5 | Специализация | продовольственные и непродовольственные товары в ассортименте |
| 6 | Срок действия договора | 5 лет с момента подписания договора, период осуществления торговой деятельности: круглогодично |
| 7 | Схема расположения НТО на территории Моргаушского района Чувашской Республики | См. приложение № 5 к проекту договора по лоту №5 |
| 8 | Начальный размер ежегодной платы за право на размещение НТО за указанный период осуществления торговой деятельности, руб. | 38040,0 |
| 9 | Размер задатка, руб. | 7608,0 |
| 10 | Величина повышения начальной цены права на размещение («шаг аукциона»), руб. | 3804,0 |

**Лот №6 Право на размещение**

| № п/п | Информация об НТО | Параметры НТО |
|---|---|---|
| 1 | Номер по схеме | 6 |
| 2 | Месторасположение | с.Моргауши, ул.Мира |
| 3 | Размер площади места размещения НТО | 12 кв. м |
| 4 | Тип | Торговый киоск |
| 5 | Специализация | продовольственные товары (молоко, молочная продукция) |
| 6 | Срок действия договора | 5 лет с момента подписания договора, период осуществления торговой деятельности: круглогодично |
| 7 | Схема расположения НТО на территории Моргаушского района Чувашской Республики | См. приложение № 6 к проекту договора по лоту №6 |
| 8 | Начальный размер ежегодной платы за право на размещение НТО за указанный период осуществления торговой деятельности, руб. | 22812,0 |
| 9 | Размер задатка, руб. | 4562,4 |
| 10 | Величина повышения начальной цены права на размещение («шаг аукциона»), руб. | 2281,2 |

**Лот № 7 Право на размещение**

| № п/п | Информация об НТО | Параметры НТО |
|---|---|---|
| 1 | Номер по схеме | 7 |
| 2 | Месторасположение | с.Моргауши, ул.Мира, 9а |
| 3 | Размер площади места размещения НТО | 15,3 кв. м |
| 4 | Тип | Торговый киоск |
| 5 | Специализация | непродовольственные товары (сотовые телефоны, аксессуары и услуги связи) |
| 6 | Срок действия договора | 5 лет с момента подписания договора, период осуществления торговой деятельности: круглогодично |
| 7 | Схема расположения НТО на территории Моргаушского района Чувашской Республики | См. приложение № 7 к проекту договора по лоту №7 |
| 8 | Начальный размер ежегодной платы за право на размещение НТО за указанный период осуществления торговой деятельности, руб. | 29085,3 |
| 9 | Размер задатка, руб. | 5817,06 |
| 10 | Величина повышения начальной цены права на размещение («шаг аукциона»), руб. | 2908,53 |

**Лот № 8 Право на размещение**

| № п/п | Информация об НТО | Параметры НТО |
|---|---|---|
| 1 | Номер по схеме | 8 |
| 2 | Месторасположение | с.Моргауши, ул.Восточная, д.9а |
| 3 | Размер площади места размещения НТО | 27,6 кв. м |
| 4 | Тип | Торговый павильон |
| 5 | Специализация | Непродовольственные и продовольственные товары в ассортименте |
| 6 | Срок действия договора | 5 лет с момента подписания договора, период осуществления торговой деятельности: круглогодично |
| 7 | Схема расположения НТО на территории Моргаушского района Чувашской Республики | См. приложение № 8 к проекту договора по лоту №8 |
| 8 | Начальный размер ежегодной платы за право на размещение НТО за указанный период осуществления торговой деятельности, руб. | 46616,4 |
| 9 | Размер задатка, руб. | 9323,28 |
| 10 | Величина повышения начальной цены права на размещение («шаг аукциона»), руб. | 4661,64 |

**Лот № 9 Право на размещение**

| № п/п | Информация об НТО | Параметры НТО |
|---|---|---|
| 1 | Номер по схеме | 9 |
| 2 | Месторасположение | с.Моргауши, ул.Ленина |
| 3 | Размер площади места размещения НТО | 10,5 кв. м |
| 4 | Тип | Торговый киоск |
| 5 | Специализация | продовольственные товары |
| 6 | Срок действия договора | 5 лет с момента подписания договора, период осуществления торговой деятельности: круглогодично |
| 7 | Схема расположения НТО на территории Моргаушского района Чувашской Республики | См. приложение №9 к проекту договора по лоту №9 |
| 8 | Начальный размер ежегодной платы за право на размещение НТО за указанный период осуществления торговой деятельности, руб. | 19960,5 |
| 9 | Размер задатка, руб. | 3992,1 |
| 10 | Величина повышения начальной цены права на размещение («шаг аукциона»), руб. | 1996,05 |

**Лот № 10 Право на размещение**

| № п/п | Информация об НТО | Параметры НТО |
|---|---|---|
| 1 | Номер по схеме | 10 |
| 2 | Месторасположение | с.Моргауши, ул.Мира |
| 3 | Размер площади места размещения НТО | 12 кв. м |
| 4 | Тип | Торговый павильон |
| 5 | Специализация | непродовольственные товары (сотовые телефоны и аксессуары) |
| 6 | Срок действия договора | 5 лет с момента подписания договора, период осуществления торговой деятельности: круглогодично |
| 7 | Схема расположения НТО на территории Моргаушского района Чувашской Республики | См. приложение № 10 к проекту договора по лоту №10 |
| 8 | Начальный размер ежегодной платы за право на размещение НТО за указанный период осуществления торговой деятельности, руб. | 22812,0 |
| 9 | Размер задатка, руб. | 4562,4 |
| 10 | Величина повышения начальной цены права на размещение («шаг аукциона»), руб. | 2281,2 |

**Лот №11 Право на размещение**

| № п/п | Информация об НТО | Параметры НТО |
|---|---|---|
| 1 | Номер по схеме | 11 |
| 2 | Месторасположение | с.Моргауши, ул.Мира |
| 3 | Размер площади места размещения НТО | 25 кв. м |
| 4 | Тип | Торговый павильон |
| 5 | Специализация | непродовольственные товары (живые цветы, горшечные цветы, семена, удобрения, горшки, сувениры) |
| 6 | Срок действия договора | 5 лет с момента подписания договора, период осуществления торговой деятельности: круглогодично |
| 7 | Схема расположения НТО на территории Моргаушского района Чувашской Республики | См. приложение № 11 к проекту договора по лоту №11 |
| 8 | Начальный размер ежегодной платы за право на размещение НТО за указанный период осуществления торговой деятельности, руб. | 47525,0 |
| 9 | Размер задатка, руб. | 9505,0 |
| 10 | Величина повышения начальной цены права на размещение («шаг аукциона»), руб. | 4752,5 |

**Лот №12 Право на размещение**

| № п/п | Информация об НТО | Параметры НТО |
|---|---|---|
| 1 | Номер по схеме | 12 |
| 2 | Месторасположение | с.Моргауши, ул.Ленина |
| 3 | Размер площади места размещения НТО | 6 кв. м |
| 4 | Тип | Торговый киоск |
| 5 | Специализация | непродовольственные товары (газетно – журнальная продукция) |
| 6 | Срок действия договора | 5 лет с момента подписания договора, период осуществления торговой деятельности: круглогодично |
| 7 | Схема расположения НТО на территории Моргаушского района Чувашской Республики | См. приложение № 12 к проекту договора по лоту №12 |
| 8 | Начальный размер ежегодной платы за право на размещение НТО за указанный период осуществления торговой деятельности, руб. | 10134,0 |
| 9 | Размер задатка, руб. | 2026,8 |
